# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

# «Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула тавраш賻»

***«Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула тавраш賻» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 1066,2 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 4 проекчĕ пурнăçланать.***

**Наци проекчĕ Раççейре пурăнакансен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, строительство отраслне хальхи вăхăтри отрасль туса хума, хуласене илемлĕ те хăтлă, аварийлĕ çуртсемсĕр тума тивĕç.**

**2024 çул тĕлне çĕршывра пурăнакансем çурт-йĕр туянмалли кредита 8 процентран пĕчĕкрех ставкăпа илме пултармалла, пая кĕрсе çурт-йĕр туянакансене эскроу-счетпа ĕçлесе хӳтлĕхе илмелле. Хăпартакан çурт-йĕрĕн пахалăхĕ те, калăпăшĕ те ӳсмелле.**

**Отрасльте малта пыракан технологисене, патшалăх пулăшăвĕн çĕнĕ механизмĕсене пурнăçа кĕртмелле. Ултă çулта пурĕ 530 пин çынна кивелсе çитнĕ çуртсенчен çĕннисене куçармалла. Хула таврашне аталантарассин ыйтăвĕсене тата парассинче çынсен пĕрре виççĕмĕш пайĕ таран хутшăнма тытăнĕ, лайăх лару-тăруллă хуласен шучĕ, 2019 çултипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ӳсмелле – 60 процентпа танлашмалла.**

## Виçĕ проект пурнăçланать

«Жилье и городская среда» нацпроект шайĕнче Чăваш Республикинче регионти виçĕ проект пурнăçланать. Вĕсем: «Жилье», «Обеспечение устойчивого сокращения непригодного для проживания жилищного фонда в Чувашской Республике», «Формирование комфортной городской среды». Чăваш Республикинче наци проектне пурнăçлама 2019 – 2024 çулсенче пурĕ 2 миллиард та 300 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă, вăл шутран 1 миллиард та 900 миллион тенкине – федераци бюджетĕнчен. 2020 çулта çак тĕллевпе республикăна валли 480 миллион тенке майлă уйăрасси паллă.

2019 çулта **«Формирование комфортной городской среды» регион проектне** Çĕмĕрле районĕпе (1000 çынран ытла пурăнакан ялсем çукран) Çĕмĕрле хулисĕр (тирпей-илемпе хăт кĕртессипе çыхăннă проектсем пулман) пуçне республикăн пур муниципалитечĕ те хутшăннă.

Çак проектăн паспорчĕпе килĕшуллĕн, 2019 çулта республикăра нумай хутлă çуртсен тавраш賻нчи пурĕ 15 территорирен сахал мар тата 23-рен сахал мар обществăлла вырăна тирпей-илем тата хăт кĕртмелле пулнă. Проекта пурнăçланин пĕтĕмлетĕвĕ çапла: нумай хутлă çуртсен тавраш賻нчи пурĕ 35 территорие тата 31 обществăлла вырăна тирпей-илем тата хăт кĕртнĕ. Республикăн тĕп хулинче, сăмахран, Атăлăн Московски çыран хĕррине хăт кĕртнине пурте кураççĕ, çак илемлĕ вырăнта канма килĕштереççĕ.

2020 çулта Чăваш Енре нумай хутлă çуртсен тавраш賻нчи территорисене тата обществăлла вырăнсене тирпей-илемпе хăт кĕртме 377 миллион тенкĕ пăхса хунă, унăн пысăк пайне, 374 миллион тенкине, федераци бюджетĕнчен уйăрнă, 2,6 миллион тенкĕ – республика бюджетĕнчен.

Кăçал нумай хутлă çуртсен картиш территорийĕсене 15-рен сахал мар тата 24 обществăлла вырăнтан сахал мар хăт кĕртме палăртнă.

Нацпроект шайĕнче **«Обеспечение устойчивого сокращения непригодного для проживания жилищного фонда»** федераци проекчĕпе пĕлтĕр çĕршывра (ТАСС пĕлтернĕ тăрăх) пурĕ аварийлĕ 800 пин тăваткал метр çурт-йĕртен çынсене çĕнĕ çурт-йĕре куçарма планланă. Çак плана чылай ирттерсе пурнăçланă.

Чăваш Енре çак ятпах пурнăçланакан регион проекчĕпе килĕшуллĕн 2019 – 2025 çулсем валли «Переселение граждан из жилищного фонда, признанного в установленном порядке до 1 января 2017 г. аварийным и подлежащим сносу или реконструкции в связи с физическим износом в процессе эксплуатации» республика программине çирĕплетнĕ. Программăра 8 муниципалитет хутшăнать: Элĕк, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсем тата Улатăр, Шупашкар, Çĕмĕрле хулисем.

Çапла 2017 çулччен аварийлĕ тесе палăртнă тата çирĕплетнĕ йĕркепе пăсмалли е реконструкцилемелли çуртсенче пурĕ 10,91 пин тăваткал метр пулнă. Программăна пурнăçласа 287 пурăнмалли çурт-йĕртен пурĕ 753 çынна куçарма планланă. Çак ĕç 6 тапхăрпа пулса иртмелле. Программăн пĕрремĕш тапхăрĕнче, 2019 – 2020 çулсенче, нумай хваттерлĕ 10 çуртра (2940 тăваткал метр ытла) пурăнакан пурĕ 181 çынна çĕнĕ çурт-йĕрпе тивĕçтерме палăртнă. Çак ĕçе пурнăçлама 100,1 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă. 2019 çулта 152 çынна хăтлă хваттерпе тивĕçтернĕ ĕнтĕ.

**«Жилье» регион проекчĕн** тĕллевĕ – пурăнмалли-çурт йĕр строительствин калăпăшне ӳстересси, вăл шутра – ипотека кредичĕсемпе ĕçленипе те. Çавăн пекех проект шайĕнче çемьесене тата уйрăм хăш-пĕр категорине кĕрекен çынсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессине те пăхса хунă. Çапла республикăра 2019 çулта пурĕ 672 пин тăваткал метр çурт-йĕр хута яма тĕллев пулнă. Республикăн строительство министрĕн пĕрремĕш çумĕ В. Максимов министерство коллегийĕнче пĕлтернĕ тăрăх, 2019 çулти 11 уйăхра республикăра 509 тăваткал метр çурт-йĕр туса хута янă.

Çурт-йĕр программисене ăнăçлă аталанма пулăшакан ытти мероприяти пурнăçланă. Сăмахран, Университетский микрорайонта çул тăвассипе ĕçлеме тытăннă. Çак пысăк ĕçе 2020 çулта вĕçлеме палăртнă. Ĕç калăпăшĕ 250 миллион тенкĕпе танлашать. Кунсăр пуçне Шупашкарти тепĕр пилĕк объектри (ача сачĕсемпе çулсем) ĕçсене вĕçлеме 350 миллион тенкĕ уйăрнă.

2020 çулта «Жилье и городская среда» наци проекчĕн шайĕнче çамрăк çемьесене çурт-йĕр туянма тата хăпартма субсиди мелĕпе паракан патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерме 287 миллион тенкĕ пăхса хунă: федераци бюджетĕнчен – 147 миллион ытла тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 100 миллион тенкĕ, вырăнти бюджетсенчен – 39 миллион ытла тенкĕ.

## Нацпроект – Муркаш районĕнче



**«Жилье и городская среда» нацпроект Муркаш районне çитнине пĕлтĕрех курма май пулчĕ.**

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – капиталлă строительствăпа общество инфраструктурине аталантарассин пай пуçлăхĕ Алексей Матросов пĕлтернĕ тăрăх, «Формирование комфортной городской среды» регион проекчĕпе иртнĕ çулта пирĕн районти 4 объектра – çуртсен картишĕсен тата обществăлла вырăнсен территорийĕсенче – тирпей-илемпе хăт кĕртес ĕçсене пурнăçланă.

Мăн Сĕнтĕрти Советская урамра çак ĕçсене 1 миллион та 995 пин тенкĕлĕх туса ирттернĕ. Хушма ĕçсене тепĕр 200 пинлĕх тунă.

Тепĕр виçĕ объекчĕ Муркашра: Заводская урамри 19 çурт территорийĕ (контракт 1 миллион та 823 пин тенкĕлĕх пулнă), Чапаев урамĕнчи 59 çурт территорийĕ (2 миллион та 333 пин тенкĕлĕх), Октябре 50 çул урамри 36, 38, 40, 42, 44, 44а çуртсен территорийĕ (2 миллион та 336 пин тенкĕлĕх). Асăннă çуртсен картишĕсенче асфальт çулсене, тротуарсене юсанă тата çĕнĕрен тунă, автомобиль лартма хушма вырăнсем йĕркеленĕ, картишсене тĕттĕм вăхăтра çутатса тăрассине, ача-пăча валли вылямалли лаптăксене йĕркеленĕ, саксем, çӳп-çап пăрахмалли урнăсем вырнаçтарнă.

2020 çулта çак проекта пурнăçлама райна 8 миллион тенкĕ ытла федераци бюджетĕнчен уйăрса параççĕ. Укса-тенкĕпе Муркашри Çĕнтерӳ паркне хăтлăлатас ĕçсене плана кĕртнĕ. Çапах та палăртмалла, ĕçсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 13 миллион тенкĕрен те иртет.

Мăн Сĕнтĕрти Çĕнтерӳ тунăранпа 40 çул çитнине халалланă паркра та тирпейпе хăт кĕртес ĕçсене пурнăçлама проект туса хатĕрленĕ. Унпа килĕшуллĕн ĕçсене 22 миллион тенке майлах пурнăçламалла. Проект хальлĕхе патшалăх экспертизинче.

Кунсăр пуçне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2019 çулти ноябрĕн 27-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшуллĕн районта картиш территорийĕсене тата социаллă объектсене çыхăнтаракан тротуарсем тума района 39 миллион тенкĕ уйăрса панă. Унпа районта 20 яхăн объекта хăт кĕртессипе усă курма планланă.

«Жилье» регион проекчĕн шайĕнче Муркаш районĕнче 2019 çулта 12,7 пин тăваткал метр çурт-йĕр туса хута янă. Вăл шутра Муркашри Парковая урамри 3 хутлă 24 хваттерлĕ çурта.

«Жилье и городская среда» наци проекчĕн шайĕнче пĕлтĕр районти 38 çамрăк çемьене патшалăх пулăшăвне тивĕçнине çирĕплетекен сертификат панă. Вĕсене патшалăх пулăшăвĕпе пурĕ 21 миллион та 462 пин тенкĕ ытла суммăлăх тивĕçтернĕ. Çак укса-тенке федераци, республика тата район бюджечĕсенчен уйăрнă.

Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас ĕç кăçал та малалла тăсăлĕ.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***